**Çумăр хыççăн**

Ут кĕтӳ-ши тĕпĕртетрĕ
Арапуç кĕперĕпе –
Тĕпĕр-тĕпĕр çуса иртрĕ
Çумăр çуртăн тăррипе.

Çуса иртрĕ те çухалчĕ
Аякри çулсем çинче.
Сар сака çуса хăварчĕ
Чечекри сад пахчинче.

Урамра чупаç уç саслă
Кӳршĕ ачисем, куран.
Хам та чупăттăм хаваслăн
Ачапча пек çаруран.

Сар хĕвелĕн те пур мар-и
Ача ăсĕ кăшт кăна:
Авă, вăл та чăтаймарĕ,
Выртрĕ лĕп лупашкана.

*Исмуков, Н. Çумăр хыççăн : [сăвă] / Н. Исмуков // Чăваш литературин антологийĕ. — Шупашкар, 2015. — [Т. 4] : Ача-пăча валли çырнă хайлавсем. — С. 327.*